23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 18 ВЫРСАРНИКУН 244 (6179) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ валли хĕллехи вăхăта апат-çимĕç, çуртйĕрсем тата шăвармалли майсем туса хатĕрлемелли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла шутлаççĕ: республикăри чылай районсенче выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлесси питех те çителĕксĕр пулса пырать. Нумай колхозсенче апат-çимĕçсем пухса хатĕрлемелли плана халиччен те пурнăçа кĕртмен, çав вăхăтрах апат-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе малалла ĕçлессине чарса лартнă. Шăнтиччен вăхăт нумай юлмарĕ пулин те, вылльăхсене хĕл каçарма çуртйĕрсене юсаса хатĕрлемен, ăшăтса çитермен. Çакна пула çамрăк вылььăхсемпе çитĕннĕ вылььăхсем вилме, вылььăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ чакма тата апат-çимĕçсем ытлашши расходланма пултараççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн Бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Чăваш АССР Çĕр-ç Халăх Комиссариатне, райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, колхозсен председателĕсене, совхозсен директорĕсемпе политотделĕсен начальникĕсене колхозсемпе совхозсенче кашни вылььăх валли СССР Совнаркомĕ 1941 çулти майăн 29-мĕшĕнче тата Чăваш АССР Совнаркомĕ 1941 çулти июнĕн 13-мĕшĕнче йышăнса çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх апат-çимĕç пухса хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртме хушас. Апат-çимĕç пухса хатĕрлемелли плана пурнăça кĕртмен колхозсемпе совхозсенче çитмен апат-çимĕçе çитерес тесе мĕнпур улăма пухмалла тата тымар-çимĕçсен çулçисемпе каю курăкĕнчен силос хывса хăвармалла.

2. Колхозсенче вылььăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаса ăшăтас ĕçе ноябрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр пурнăçа кĕртес шутпа çав ĕçсене вĕçлемелли сроксене колхозсем тăрăх кăтартса пама райисполкомсемпе парти райкомĕсене хушас.

3. Вылььăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаса ăшăтса йĕркелес ĕçе тума кашни колхозра, совхозра колхозниксенчен, çавăн пекех тата вылььăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен работниксенчен ремонт бригадисем тăвас.

4. Ноябрĕн 5-мĕшне çитиччен вылььăх-чĕрлĕх фермисенчи кадрсен йышне: ферма заведующийĕсем, вылььăхсене пăхакансем, конюхсем, свинарьсем, дояркăсем тата ытти работниксем мĕн чухлĕ пуррине тĕрĕслесе тухмалла, колхозсемпе совхозсенче мĕнпур фермăсене вылььăх-чĕрлĕхе пăхма кирлĕ кадрсемпе пĕтĕмĕшпех комплектласа çитермелле.

5. Октябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр колхозсемпе совхозсенче мĕнпур хатĕрленĕ апат-çимĕçсене шута илмелле, вĕсене актсем тăрăх колхозсемпе совхозсенчи кладовщиксен е ферма заведующийĕсен аллине виççе памалла. Вылььăхсене витере хупса усрамалли тапхăр валли уйăхсерен мĕн чухлĕ апат-çимĕç расходламалли нормăсемпе плансене колхозсемпе совхозсем тăрăх çирĕплетес. Апат-çимĕçсене тĕрĕс расходланине контроллесе тăрас ĕçе колхозсенче—колхоз председателĕсем çине, совхозсенче вара—совхозсен директорĕсем çине хурас.

6. Хĕллехи мĕнпур тапхăра валли кирлĕ апат-çимĕçсенчен виççĕ пайĕн пĕр пайĕнчен кая мар фермăсем патне турттарса хумалла, çак запаспа хĕллехи çил-тăманлă тата çуркуннехи шывшурлă тапхăрта кăна усă курмалла, вĕсене кĕркуннеренех расходлама тытăнма чармалла. Ĕçлекен вылььăхсем валли çураки вăхăтĕнче тăрантарма шултăра апат-çимĕçсемпе концентратсен никам тĕкĕнмелле мар запасне уйăрса хумалла. Çав апат-çимĕçсене ытти тĕрлĕ вылььăх-чĕрлĕхсене пама чарас.

7. Апат-çимĕçсен хисепне ÿстерес шутпа колхозсене çапла тума сĕнес тата совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: чи паха утăран, пуринчен ытларах пăрçа йышши культурăсен утинчен, сысналене тăрантарнă çĕрте усă курма вĕтетсе утă çăнăхĕ тумалла.

8. Колхозсене çапла тума сĕнес: улăма хирте пухса колхозсене турттарнăшăн е улăма пухса капана хывнăшăн турттарнă мĕнпур улăмăн 5-мĕш пайне колхозниксене пама юрать, çавăн пекех тата колхозниксем хăйсен ĕнисемпе улăм пухса колхоза турттарнăшăн мĕнпур улăмран çуррине колхозниксене пама юрать.

9. Мĕнпур вылььăхсем валли вĕсене шăвармалли лайăх майсем туса памалла, колхозсемпе совхозсенче пур пек çăлсемпе пусăсене тĕрĕслесе тухмалла, юсамалла. Шăвармалли вырăнсем çителĕксĕр çĕрте çĕнĕрен çăлсем чавмалла, май килнĕ таран шыва вылььăх витисене тÿрех çитермелле тăвас пулать, çак ĕç валли водопроводсемпе, насоссемпе, валаксемпе усă курмалла.

10. Кашни районра районри работниксенчен, МТС-семпе совхозсен работникĕсенчен, зоотехникăпа ветеринари работникĕсенчен райисполкомсемпе райкомсен 2—3-шер комиссине тăвас, вĕсене колхозсемпе совхозсенчи активпа тата комсомолецсемпе пĕрле, октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 5-мĕшне çитиччен кашни колхозпа совхоз вылььăхсене хĕле кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухма хушас, тĕрĕслесе тухнă хыççăн акт çырмалла, çав акта райисполком çирĕплетме тивĕçлĕ.

Вылььăхсене хĕле кĕртме хатĕрлес ĕçре районсене, колхозсене тата совхозсене пулăшма республикăри зоотехниксене, ветврачсене, партипе совет работникĕсене пĕр уйăхлăха командировкăна ярас.

11. ВКП(б) райкомĕсене, политотделсен начальникĕсене вылььăхсене хĕле кĕртме чи лайăх хатĕрленсе çитессишĕн колхозсен фермисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрикăри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Производствăллă задание пурнăça кĕртес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрикăри рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Константин Никонович **Гаврикова**—электромонтера.
2. Сергей Васильевич **Гартунга**—объединенин главнăй энергетикне.
3. Павел Киреевич **Жданникова**—каменщике.
4. Павел Александрович **Иванова**—гараж заведующине.
5. Зоя Ивановна **Казанкована**—ткачихăна.
6. Анна Степановна **Корнеевăна**—монтажницăна, халĕ мастерăн помощникĕ пулса ĕçлекенскере.
7. Анастасия Степановна **Корнеевăна**—монтажницăна, халĕ банкоброшница пулса ĕçлекенскере.
8. Иван Георгиевич **Кобякова**—электрохуçалăхăн заведующине.
9. Александр Георгиевич **Коновалова**—шеф-монтера.
10. Александр Александрович **Логинова**—фабрика директорне.
11. Арон Лейбович **Либермана**—объединенин технологне.
12. Наталия Степановна **Наумовăна**—кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçĕн инструкторне.
13. Иульяна Николаевна **Николаевăна**—ватерщицăна.
14. Мария Никандровна **Николаевăна**—ткачихăна.
15. Анна Ивановна **Рычковăна**—тĕртекен фабрикăн начальникĕ пулса ĕçлекенскере.
16. Юрий Соломонович **Рубинштейна**—фабрика проекчĕн главнăй инженерне.
17. Мария Ивановна **Сисикинăна**—монтажницăна, халĕ фабком председателĕ пулса ĕçлекенскере.
18. Надежда Петровна **Сазоновăна**—техник-монтажницăна, халĕ пир-авăр тĕртекен фабрикăн мастерĕ пулса ĕçлекенскере.
19. Иван Николаевич **Соловьева**—мастерăн помощникне.
20. Ефим Исаакович **Френкеле**—ÇССР Наркомтекстилĕн объединенин директорне.
21. Рахмиель Вениаминович **Фрезинские**—объединенин директор заместительне тата главнăй инженерне.
22. Александр Васильевич **Фомичева**—шеф-монтера.
23. Иван Иванович **Чернышева**—главнăй инженера.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателе З. АНДРЕЕВА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн Ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ

Шупашкар хули, 1942 çулти октябрĕн 17-мĕшĕ

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Вăрнар МТС-ĕ тăрăх:

165. Комбайнер **Кондратий Андреевич Андреев.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 200 гектар тырă вырса пуçтарнă тата 50 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

166. Комбайнер **Аристарх Федорович Скворцов.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 187 гектар тырă вырса пуçтарнă тата 120 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Пăрачкав МТС-ĕ тăрăх:

167. Тракторист **Петр Иванович Гришин.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 158 процент тултарнă тата 206 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

168. Трактористка **Анна Михайловна Грачева.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 143 процент тултарнă тата 73 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

169. Комбайнер **Захар Иванович Ягочкин.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 391 гектар тырă вырса пуçтарнă.

170. Комбайнер **Степан Иванович Ступаков.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 328 гектар тырă вырса пуçтарнă тата 244 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

171. Комбайнер **Василий Николаевич Морозов.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 216 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнă тата 110 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх отделĕпе Чăваш АССР Наркомземĕн Политикăллă секторĕ тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çакна кĕртнĕ:

172. **Элĕк МТС-ĕ** (директорĕ **Яхваров** юлташ, политотдел начальникĕ **Макаров** юлташ, старши механикĕ **Майоров** юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 101,1 процент тултарнă, çав шутра комбайнпа вырмалли плана 186,9 процент тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвăн виççĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

1942 çулти виççĕмĕш кварталти итогсем тăрăх Чăваш республикинчи финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче **Шăхасан районĕнчи финанс отделĕ** (исполком райсовечĕн председателĕ **Скворцов** юлташ, райфинотдел заведующийĕ **Волков** юлташ) çĕнтернĕ тесе шутлас тата ăна **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне** 12 пин тенкĕлĕх пĕрремĕш премипе пĕрле памалла тăвас;

ăмăртури иккĕмĕш вырăна Çĕрпÿ районĕнчи финанс отделĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ **Хабаров** юлташ, райфинотдел заведующийĕ **Яснопольский** юлташ) йышăннă тесе шутласа тата ăна 8 пин тенкĕлĕх иккĕмĕш премии парас;

ăмăртури виççĕмĕш вырăна Елчĕк районĕнчи финанс отделĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ **Тимофеев** юлташ, райфинотдел заведующийĕ **Прокопьев** юлташ) йышăннă тесе шутлас, ăна 5 пин тенкĕлĕх виççĕмĕш премии парас;

доходсене пурнăçлас тĕлĕшпе виççĕмĕш кварталта çак райфинотделсем лайăх ĕçленине палăртас: Етĕрне райфинотделĕ (заведующийĕ **Кочергина** юлташ), Çĕмĕрле райфинотделĕ (заведующийĕ **Обливанцев** юлташ), Канаш райфинотделĕ (заведующийĕ **Смирнов** юлташ) тата Улатăр горфинотделĕ (заведующийĕ **Носков** юлташ).

Унпа пĕрлех Совнарком Куславкка райфинотделĕ (заведующийĕ **Тарасова** юлташ) тата Первомайски райфинотделĕ (заведующийĕ **Иванов** юлташ) виççĕмĕш кварталта çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Совнарком Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатне виççĕмĕш кварталта финорганĕсен ĕçне перекет касси енĕпе, ирĕклĕ страховани енĕпе, культсбор планне тултарассипе тата авланманнисемпе ачасăррисем çине хунă налога пухассипе лайăхлатма хушнă.

Шкулсемпе больницăсем валли—вутă

ÇĔРПУ. **(Телефонпа).** Топливо хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе пыракан ăмăртура сентябрь уйăхĕнче мала тухнăшăн Чăваш АССР Совнаркомĕ пирĕн леспромхозăн ĕçре палăрнă работникĕсене 10 пин тенкĕлĕх премии памалла турĕ.

Пирĕн леспромхоз виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана 114 процент, сентябрьти ĕçсен заданине 245 процента яхăн тултарчĕ. Кăçал, ĕç вăйĕ пĕлтĕрхинчен чылай сахал пулнă пулин те, ку таринччен турĕ 7.500 кубометр вутă хатĕрлерĕмĕр. Унсăр пуçне государство панă васкавлă заказсене вăхăтра тата япăх мар пурнăçларăмăр.

Çакăн пек çитĕнÿсем тума пире райсовет исполкомĕ, ялсовет, колхоз председателĕсем чылай пулăшрĕç. Кузьмин, Никонов тата Музалов юлташсем председатель пулса ертсе пыракан «Союз» «Новый путь» тата «Молодая сила» колхозсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе панă заданисене иртнĕ кварталта ытлашшипех тултарчĕç.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче халĕ уяв умĕнхи ăмăрту пырать. Ăмăртура А. Филиппова, М. Паньков т. ыт. рабочисем, вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенскерсем, уйрăмах пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Вĕсем кулленхи заданисене 1,5 хут ирттерсе тултараççĕ.

И. Семенов, А. Михайлов десятниксем хăйсен участокĕсенчи рабочисен ĕçне лайăх организациленĕ. Çавна май вĕсен участокĕсем вутă заданирен иккĕ хут ытларах хатĕрлеççĕ.

К. КАГАНОВСКИЙ,
Леспромхоз директорĕ.

Хаклă фронтовиксем валли

Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пухнă парнесен эшелонĕ паян фронта тухса каять

Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăн коллективĕ пуçарнипе пирĕн республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн геройла воинĕсем валли Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем пухас ĕçе пысăк хавхаланупа туса ирттерчĕç. Республикăри рабочисемпе колхозниксем тата служащисем темиçе вуншар тонна аш-какай, колбаса, çу, тулă çăнăхĕ, канфетсем, премĕксем, пыл, варени, табак, пиншер литр тĕрлĕ эрехсем, çăмарта, пахча-çимĕç нумай пухнă. Кусемсĕр пуçне предприятисемпе учрежденисенче уйрăм çынсен парнисене нумай пухнă.

Парнесем пухас ĕçе Шупашкар, Канаш хулисенче тата Сĕнтĕрвăрри, Улатăр районĕсенче лайăх организацилесе ирттернĕ.

Октябрь уявĕ ячĕпе пухнă парнесен эшелонĕ, 15 вагонран тăраканскер, паян фронта тухса каять. Эшелонпа пĕрле ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Рябов, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Чурбанов, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия» колхозăн председателĕ Анкудинов, комсомолăн Н-ски завод çумĕнчи комитечĕн секретарĕ Партолина, Канаш деповĕнчи чи лайăх машинистсенчен пĕри Бадеев юлташсем каяççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Октябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсем турттарса пыракан 60 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 15 орудие пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 3 поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсен хаяр атакисене сире-сире яраççĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, кункаçа нимĕçсен 43 танкне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн чаçсем завод поселокĕсенчен пĕринчен тухса кайнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырăнти çапăçусем пыраççĕ. Пĕр участокра пирĕн артиллери пенипе тата пехотнăй подразделенисем атака тунипе противникăн 5 танкне, 4 минометне, 16 пулеметне, 2 противотанковăй орудине тата 28 окопĕпе дзотне пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра румынсен чаçĕсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илесшĕн пулса пилĕк хутчен контратака тунă, анчах пирĕн боецсем пыра-пыра çапнипе кашни хутĕнчех каялла чакса кайнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Моздок районĕнче противникăн танкĕсемпе тата пехотипе хаяррăн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 5 танк пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра Маркин юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Овчаренко юлташ командир пулса тăракан танк экипажĕ противникăн икĕ йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ тата гусеницăсемпе таптаса темиçе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенче чылайĕшĕнче икĕ енĕ те пĕр пĕрин çине тупăпа персе тăнă тата разведчиксем шыраса çÿренĕ. Кункаçа пирĕн артиллеристсем, разведчиксем тата снайперсем пенипе противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн подразделенисем Васильев юлташ ертсе пынипе нимĕç пехотин атакине сирсе янă. Пирĕннисем пăшалпа тата пулеметпа пенипе гитлеровецсен каялла çаврăнса каймалла пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн виллисем нумай выртса юлнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен виçĕ поездне ÿпĕнтерсе янă. 23 вагон турпас пек ванса кайнă, 61 вагон рельссем çинчен сикнĕ. Çавна пула нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем нумай вилнĕ.

* * *

Нимĕçсен 387-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 541-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Артур Ципфель çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи хăйĕн личнăй составне 70 процент ытла çухатрĕ. Ытла та йывăр çухатусем 541-мĕш полкра пулчĕç. Ку полкра вилнисем хушшинче: полк командирĕ Лангефельд полковник, 1-мĕш батальон командирĕ Хедер майор, 2-мĕш батальон командирĕ Клейн майор. Хĕл çывăхарса килнине кура салтаксем нумайĕшĕ пуçĕсене усрĕç. Вĕсем çапла калаççĕ: «Хĕлле эпир кунта пурте пĕтетпĕр», теççĕ. Нумаях пулмасть пирĕн ротăран 11 салтак нимĕн хыпарсăр çухалчĕç. Рота командирĕ Кек капитан вĕсем тыткăна парăннă пулмалла, терĕ».

* * *

Румын салтакĕн Илие Врабийĕн ашшĕ патне яма тесе çырнă çырăвĕнче çапла каланă: «Юлашки атака вăхăтĕнче хам мĕн курнă хыççăн эпĕ киле таврăнас шанчăка пĕтĕмпех çухатрăм. Кунта, Сталинград патĕнче, халиччен курман çапăçусем пулса иртеççĕ. Пиллĕкмĕш пехотнăй полк 4 хутчен атакăна кайрĕ те ытла та пысăк çухатусем тÿсрĕ. Вилнĕ офицерсемпе салтаксене лавсем çине, ĕлĕк эпир сапла лав çине вутă тиенĕ пек тиерĕç... Пилĕк уйăх ĕнтĕ, акă, эпĕ фронтра, анчах пĕрмаях кĕпе-йĕме улăштармасăр çÿретĕп. Ман çинче пыйтă мĕнчухлине чухласа илме те йывăр. Эпĕ кунта юлма хăратăп. Ку зонăра ытла та вăйлă сивĕсем пулаççĕ».

* * *

Воронеж облаçĕнчи Дегтярное ялĕнчи колхозниксем П. Д. Воронинпа М. Д. Клубникин фашистсен тыткăнĕнчен çăлăнса тухнăскерсем, çапла каласа pană: «Нимĕç захватчикĕсен тыткăнĕнче пурăнакан совет çыннисен пурнăçĕ каторгăринчен те япăхрах. Гитлерла çаратуçăсем пÿртри пĕтĕм арчасене çаратрĕç, вылььăх-чĕрлĕхе, пĕтĕм тырра туртса илчĕç. Пур хресченсене те ваттисемпе çамрăккисене те — гитлерла чунилленсем вĕлерессипе хăратса боеприпассем тултарнă ещĕксене çĕклеттереççĕ, блиндажсем тутараççĕ, окопсем чавтараççĕ. 18—20 сехет хушши çурăма тÿрлетмесĕр ĕçлеме тиветчĕ, çиме пĕр татăк çăкăр та çукчĕ. Октябрĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсем арçынсен, хĕрарăмсен тата çитĕнсе çитмен ачасен ушкăнне Германие ăсатма суйласа илчĕç. Петрова Евдокия, Сорина Анна тата Колышкина Вера фашистсен тыткăнĕнчен хăтăлас тесе ялтан систермесĕр тухса кайма хăтланчĕç. Гитлерла мерзавецсем вĕсене ял хĕрринче тытрĕç те яла илсе килсе çакса вĕлерчĕç».

Октябрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче хаяррăн çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн темиçе атакине сирсе янă. Нимĕçсен пехоти 40 танк пулăшса пынипе пирĕн хула урамĕсенчен пĕрне хÿтĕлекен чаçсене атакăланă. Пирĕн боецсем вăйлă çапăçура нимĕçсен 23 танкне тата 350 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн подразделенийĕсем оборонăн çĕнĕ рубежĕ патне чакнă. Пирĕн гвардеец-минометчиксем вăйлăн персе тăрса нимĕçсен 4 танкне тата 20 автомашинине çити çунтарса янă, противникăн пехотине 3 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет подразделенийĕсем çапăçса пырса разведка тунă. Пирĕн боецсем штык вĕççĕн çапăçса гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 2 оруди тата 6 пулемет пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен темиçе дзочĕпе блиндажне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем противникпа хаяррăн çапăçса нимĕçсен 3 танкне, 2 бронемашинине тата 7 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсен 100 виллине яхăн выртса юлнă. Лейтенант Белоусов командир пулса тăракан подразделени нимĕç пехотин пĕр роти тунă атакăна сирсе янă. Противник пĕр батальона çити пехота вăйĕпе иккĕмĕш хут атакăланă, анчах унăн иккĕмĕш хутĕнче те каялла чакмалла пулнă. Çав çапăçура нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противникăн пехоти авиаци пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăланă. Пысăк çухатусем тÿссе, нимĕçсем каштах малалла куçнă. Н-ски соединенин боецĕсем, тăшманăн атакисене сирсе тăрса, 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карели фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Амбросовпа Соловьев юлташсен подразделенийĕсем белофинсен оборонин малти хĕррине атакăланă. Пирĕн боецсем тыла кĕрсе кайнă та противникăн тĕреклетнĕ пунктне тытса илнĕ. Белофинсем темиçе хут та контратака тунă, çав контратакăсенче вĕсен 200 салтакпа офицера çити вилнĕ. Каçпала пирĕн подразделенисем, дзотсемпе блиндажсене сирпĕнтерсе ярса, хăйсен малтанхи позицийĕсем патне таврăннă. Çав операцире пирĕннисем 18 пулемет, 89 карабин, 27 ещĕк мина, 50 ещĕк патрон тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Кавказăн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ юлашки вăхăт хушшинче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăн боеприпассем тиенĕ поездне ÿпĕнтерсе янă, 4 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата баксенчен нумай тонна горючи юхтарса кăларнă.

* * *

Нимĕçсен 543-мĕш пехотнăй полкĕн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Карл Кайндль çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче вырăссем пирĕн полка аркатса тăкрĕç. Иккĕмĕш батальонăн 6-мĕшпе 7-мĕш ротисене пĕтĕмпех пĕтерсе хунă. Пĕрремĕш батальон та пысăк çухатусем тÿснĕ. Питĕ нумай офицер стройран тухнă. Манăн юлташ Иосиф Кайндль нумаях пулмасть мана çапла каларĕ: «Малашне те ĕç çапла пырсан, Германи çарĕнче малалла вăрçма ытла та сахал салтак тăрса юлать», терĕ».

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Нимĕçсен 16-мĕш мотодивизийĕнчи салтак Алоиз Т., Хĕрлĕ Çар енне каçнăскер, çапла каласа панă: «Мана нимĕç салтакĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тата мирлĕ совет гражданĕсене мăшкăлланине, тискеррĕн тыткаланине курма тĕл килчĕ. Курска кайнă чухне Софиеевка, Димитриевка, Михайловка тата ытти ялсем витĕр тухрăм. Кашни ялтах йывăçсем çинче арçынсемпе хĕрарăмсен виллисем çакăнса тăраççĕ. Эпĕ çынсенчен—мĕнле çынсем çаксем? тесе ыйтрăм. Мана—вырăнти хресченсем вĕсем, тесе ответлерĕç».

* * *

Мореэ хулинчен инçех мар вырăнта (Францире) оккупацилемен территори çине Германири тыткăнран тарнă салтаксен пысăк ушкăнĕ каçнă. Чикĕре вĕсем нимĕçсен патрульне тапăннă та 18 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Хăйсен тăван çĕршывне таврăннă хыççăн çав çынсен халь Франци полицийĕнчен пытанса пурăнма тивет.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллă пулнăшăн, çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, личнăй состав çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн, Ленин орденлĕ 70-мĕш стрелковăй дивизирен 45-мĕш Гвардейски Ленин орденлĕ стрелковăй дивизи тунă.

Дивизи командирĕ — Совет Союзĕн Геройĕ полковник Анатолий Андреевич **Краснов**.

Асăннă дивизие Гварди ялавне параççĕ.

Вĕлер нимĕçе!

Телейлĕ эсĕ, Генрих Гейне!
Бетховен,
   эсĕ те телейлĕ!
Хальхи Германие пĕлместĕр эсĕр
Пĕлсен тăраймăттăр чĕнмесĕр.
Авал вăл кĕнеке те пичетленĕ,
Паранкă лартма та вĕрентнĕ,
Сĕтел çине чавсаланса
   тĕнче çинчен,
      этем çинчен
         философиленĕ,
Шыраннă,
   иккĕленнĕ...
Халь сирĕн çĕрĕр юрă юрламасть—
   вĕрет вăл йытăлла,
Халь сирĕн çĕрĕр сăвă та çырмасть —
   улать вăл кашкăрла.
Философ мар халь нимĕç,
Поэт та мар халь нимĕç:
Вăл чунсăр,
   пуçсăр,
      вăл — салтак,
Турри халь унăн танк.
Танкпах вăл тĕнчене тухасшăн.
Тĕнче хуçи — пĕр çĕрçăтасшĕ! —
   фюрер çеç пуласшăн.
Вăл Мускаврa тăвасшăнччĕ парад,
Анчах Мускав хăлха чикки парать.
Хăлха чикки тыттарĕ Дон çинче,
Хăвалĕ Атăл хĕрринчен,
Хăвалĕ Ленинград панчен,
Тасатĕ Çурçĕр Кавказран...
Тараймĕ фюрер кĕтнĕ шăларан!
«Тăршшĕ —
   ик метр,
      урлăш —
         пĕрре
Территори кирлĕ Гитлĕре!»
Çапла каланă ватă Шелепи.
Эп çамрăкки,
   вĕри сăмахăма эп шеллĕп-и!
Ылхан чĕлхи, кил ман пата!
Паян эс бомбăпа пĕр тан.
Паян поэт йыхравçă,
      трубадур,
Вăл лăпкă лирик мар,
      сатур.
Фашист çине чул пек эс ӳк, сăмах,
Çитер ăна,
   çитер тăхлан çăма!
Паян
   мĕнпур тĕнче
      шавлать:
Вĕлер нимĕçе!
Вĕлермессен —
   çапа пăвать.
Çапла калать халь Лондон,
      Вашингтон,
Çапла калать тилмĕрет Белград,
Хăтар тет чех,
   çăлсам тет путтаннан,
Эй, турă, тет поляк,
   çут кун кăтарт!
Вĕлер тет нимĕçе норвег,
Ан тив тет кĕвĕçтĕр Квислинг.
Вĕлер тет нимĕçе таптанă грек,
Ан пултăр тет пусне сухатнă вĕсĕн.
Вĕлер тет нимĕçе француз,
Вĕлер тет ит ăнă Париж,
Вĕлер тет серб,
   пуçна ан ус,
Хăй Берлине салат эс пăрр!.. ниш!
Вĕлер тет нимĕçе Шевченко çĕрĕ,
Вĕлер тет нимĕçе тăвăннăшăм Белорусс,
Килсемĕр тет Литва,
   вилмен-ха тет,
      эп чĕрĕ,
Часрах тет Эстони, —
   çав нимĕç майне çапса хуç!
Часрах тет тĕнче,
   эй, иккĕмĕш фронт,
Часрах тет хускал,
   хыпалан, —
Çав тĕпсĕр хырăма тăрант:
Хыçран пырса çап,
   хыçран!

* * *

Вуникĕ пуçлă чăшăлл!.. çĕлен п
Европа кăкăрне ĕмет германец.
Ĕмет вăл хĕлĕпе,
   ĕмет вăл çăвĕпе...
Ун мăшкăлне мĕнле хĕр манĕ?
Ун çурисем те йăшăлл!.. шурĕ
Римран,
   Будапештран,
      Бухарестран,
         Гельсингфорсран...
Вĕсем Хĕвел çине куç уçрĕç,
Кавказ патне те çитрĕçĕ шуса.
Кам чĕннĕ нимĕçе?
   Кам кĕтнĕ нимĕçе?
Никам чĕнмен!
   Никам кĕтмен!
Мĕншĕн юнпах вăл хĕвĕнсе
Вунăтăваттăмĕш çултах пĕтмен?
      Мĕншĕн?

* * *

Чингиз таптанă Русь хирне,
Мамай пăтратнă Дон шывне,
Анчах та ку — фашист,
Çăхан карти патши.
Вăл хураран хура,
Вăл хурахран хурах.
Хурах мĕскер? —
Кĕлет çаратнă та — вĕçтер!
А ку — хули-хулипех вăрлать,
Ял-ялĕпе вăрлать,
Чышать,
   пусать,
      ишет,
         кăвар тĕртет...
Паян
   тăват çулхи ача та
Тăшман камне пĕлет,
Плакат çине пăхмасăр
Вăл Гитлер тет,
      фашист тет.
Çĕрĕмĕре фашист таптать,
Таканлă атăпа таптать.
Хура лашисене
Дон шывĕпе вăл шăварать,
Ĕнтĕ вăл анлă Атăла та пăтратать.
Çĕршыв ачи,
      чăтатпăр-и çак хурлăха?
Пĕр пусăм та ан яр вăрхурах!
Çап хытăрах,
      тăраймаслах!
Пĕр пусăм та ан чак,
Чакать хăравçă çын анчах!
Çĕршыв ачи, —
      туркмен-и,
         вырăс-и,
            грузин-и эс,
Чăваш-и,
   мăкшă-и,
      тутар-и,
Хаяр черкес-и,
      кабардин-и эс,
е белорус-и,
      украинец-и — пĕрех! —
   Çав нимĕçе вĕлермеллех
      çапар-и!
Поэт нихçан та вĕлерме чĕнмен.
Паян чĕнет вăл вĕлерме:
Хăта кăна çав нимĕç-мур çитмен —
Унта хĕнхур,
   унта тĕрме.
Çĕршыв ачи,
Пăх çавраăнса тăван ялу çине —
Тăван ялу вутра!
Пăх çавраăнса тăван хулу çине —
Тăван хулу вутра!
Сана аннÿ чĕнет
   çăлсам тесе.
Сана ачу кĕтет
   вĕлерчĕ нимĕçе тесе.
Аçта сан арăму?
Çапса нимĕçе.
   Вăл чурара.
Мĕнле-ха чăтăн сан чуну,
Аçтан хăват ил пултăр алăра!
Шакка эс нимĕçе, шакка,
Ытта шакканă пек шакка,
Вăл уртăр çав шакал!
Самолетран шакка,
Пулеметран шакка,
Автоматран шакка,
Хыр тăрринчен шакка,
Гранатăпа салат,
Тупăпала аркат,
Танкран ислет,
Двотне кисрет...
Вĕлер ăна кăн!
Вĕлер ăна ана вĕлер!
Вĕлер хăть кăнтăрла,
Вĕлер хăть каç,
   вĕлер хăть ир.
Эхерте пуля юлмасан,
   прикладупа эс çап,
Атту кĕлипеле эс, ир!
Салат унне
   пуç чашкине,
Тапаçлансан—
   эс пăв карланкине,
Вăл вилтĕр,
   вилтĕр вăл хăрăлтатса.
Хура юнне хăсса.
Çапла анчах çав инкекрен —
Çав кашкăр шăллă нимĕçре
Эс хăтăлан,
   тавăран,
      чапа тухан.
Çапла анчах çитет ылхан,
Çапла анчах ялна,
   йышна
      çăлан,
Телейлĕ, лăпкă кун-çулна
   калле çавран!

СТИХВАН ШАВЛЫ.

Государствăна тырă, пахча-çимĕç парас ĕçе хăвăртлатмалла

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн 12-мĕш пленумĕ кăтартса панă хыççăн тĕп вырăн хурса, республикăри хăшпĕр районсем ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе лайăхлатрĕç. Шупашкар, Куславкка, Çĕмĕрле районсем ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес парас тĕлĕшпе Октябрĕн малтанхи çур уйăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Шупашкар районĕ государствăна тырă памалли обязательствăна 74,9 процент, Çĕрĕн фондне тырă хывмалли обязательствăна 96,6 процент, натуроплата шучĕпе памалли тырра 90,1 процент тӳлесе татрĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана пурĕ 84,2 процент пурнăçларĕ. Шупашкар районĕн колхозсем государствăна утă памалли плана 106 процент, çĕрулми памалли плана 58,7 процент, пахча-çимĕç памалли плана ... процент тултарнă. Район ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре республикăра чи малти вырăнта тăрать.

Çавăн пекех Куславкка, Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсем те ку тĕлĕшпе хастарлăн ĕлеççĕ. Çĕмĕрле районĕ тырă обязательствине 100,7 процент пурнăçларĕ, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçĕн планне пурĕ 67,9 процент тултарнă.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри колхозсенче государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Нумай районсем октябрĕн малтанхи çур уйăхĕнче ку тĕлĕшпе ĕçре татăклă улшăнусем тумарĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парас ĕçе республикăри колхозсем пурĕ 41,3 процент пурнăçланă пулсан, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне эпир государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырра 69,9 процент çеç панă, Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне 31,8 процент çеç хывнă, натуроплата шучĕпе тухакан тырра 49,7 процент çеç тӳлесе татнă. Çапла государствăна тырă хатĕрлесе парас плана республикăри колхозсем 49,7 процент çеç тултарнă. Государствăна тырă парас ĕç, малтанхи пекех, Шăмăршă, Пăрачкав, Елчĕк районĕсенче начар пырать. Ку районсем иртнĕ çур уйăхра ĕçре нимĕнле улшăнусем те туман.

Государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕçсем парас ĕç начар пулса пынине уйрăмах паллă тумалла. Сивĕ кунсем çывăхарса килеççĕ. Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине государствăна турттарса парас ĕçе пĕр кунта та кая хăвармалли марри пурнишĕн те палă. Республикăра çĕрулми каларса пухас ĕçе пур çĕрте те пекех вĕçленĕ пулсан та, государствăна çĕрулми пурĕ те 43 процент çеç парса, ку шутран колхозсем хăйсен обязательствисене 66 процент пурнăçларĕç. Натуроплата шучĕпе тухакан çĕрулмине турттарса парас ĕç пит те япăх пулса пырать. Пĕтĕмпех илсен, государствăна çĕрулми хатĕрлесе парас ĕçе октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне республика 40,7 процент пурнăçларĕ. Государствăна çĕрулми парас тĕлĕшпе Сĕнтĕр, Красноармейски, Вăрмар, Шупашкар районĕсем плана мĕн пуррине ыраççĕ. Шупашкар районĕ ку ĕçе 4,5 процент çеç, Кувакино районĕ 7,5 процент çеç, Пăрачкав районĕ 8,1 процент çеç пурнăçланă.

Çавăн пекех пахча-çимĕçсем парас ĕç те вăрăма тăсăлса пырать. Ку тĕлĕшпе республикăри колхозсем плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 48,1 процент пурнăçланă. Комсомольски, Советски, Шăмăршă, Чкаловски, Елчĕк районĕсем государствăна пахча-çимĕç пама тытăнманпа пĕрех.

Колхозниксемпе колхозницăсен анлă масси совет государстви умĕнчи хăйĕн малтанхи обязанноçне лайăх ăнланать, государствăна ялхуçалăх продукчĕсене вăхăтра хатĕрлесе парассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлет. Тăван çĕршывра нимĕç фашисчĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра вĕсем хăйсен çак тивĕçне нихăçанхи пек мар чыслăн пурнăçлама тăрăшаççĕ. Кăна уборкăри ĕçсем уççăнах кăтартса пачĕç. Ĕç вăйĕ сахалтарах пулнă пулсан та, республикăри колхозсем кăçал тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пысăк хăвăртлăхпа туса ирттерчĕç, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем те нумай çĕрте ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Партипе совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсемпе МТС политотделĕсен государствăна тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми парас ыйту тавра колхозсенче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе вăйлатмалла, авăн çапнă çĕрте, транспорт бригадисен ĕçĕнче социализмлă ăмăртăва сармалла. Çак ĕçре колхозсен председателĕсене яла кайса пулăшни кирлĕ, государствăна тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми парас ĕçе пĕр кунта кая хăварма юрамасть. Октябрь уявне пур колхозсен те государство умĕнчи обязательствăсене татса панипе кĕтсе илмелле.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре çитĕнӳ курăнмасть

ЭЛĔК, октябрĕн 17-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç халĕ те япăх пулса пырать. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана район пурĕ те 42,8 процент çеç тултарнă. Юлашки 5 кун хушшинче тунă ӳсĕм çак ĕçе районри чылай колхозсенче кирлĕ пек хакламаннине уççăнах кăтартса парать. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çакăн пек юлса пыни вăл колхоз руководителĕсем ĕçре туртăм вăйĕпе туллин усă курманнинчен килет.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Кĕрхи çĕртме тумалли 1942 çулхи государство планне пурнăça кĕртмелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление район пурнăçласа пымасть. Кĕрхи çĕртмере лашасен 40 процентĕпе усă курма май пур пулсан та, паянхи кун суха тунă çĕрте лашасен 20—30 процентĕ çеç ĕçлет. Ку çеç те мар, хăшпĕр колхозсем çумăр çуман кунсемпе те пачах усă курмаççĕ. Качалăвăри «Труд» колхозăн (председателĕ Быков) план тăрăх кăçал 68 гектар сухаласа хăвармалла, паянхи куна пурĕ те 12 гектар çеç сухаланă. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте куллен 8 лаша ĕçлемелле пулсан, 3—4 лаша çеç ĕçлет, ытти лашасем ахалех тăраççĕ.

Уйкасри Буденный ячĕпе тăракан колхозăн (председателĕ Николаев) кăçал кĕрхи çĕртмене 93 гектар сухаласа хăвармалла, паянхи куна колхоз пурĕ те 5 гектар çеç сухаланă. Колхоз кĕрхи çĕртме тума кая юлса тухрĕ; апла пулсан та, çĕртмене 12 лашапа тăвас вырăнне 3—4 лашапа çеç тăваççĕ. Хăçан сухаласа пĕтерес теççĕ-ши укта кĕрхи çĕртме сухине?

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе Кармалти «Комсомолец», Актайри «Комбайн» колхоз руководителĕсем «вăхăт çук» тесе вăраха янă. Анчах та ку колхозсенче авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем те питĕ те кая юлса пыраççĕ. «Вăхăт çук» тени вăл кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кая хăваракан сăлтав пулма пултараймасть, вăл руководительсен япăх ĕçне çеç уççăн кăтартса парать. Ку колхозсенче колхозниксен ĕç дисциплинине тĕпренех çирĕплетмелле.

Районра кĕрхи çĕртмене вăл пысăк тухăçлă тырпул туса илме питех те кирлине лайăх ăнланса тăвакан колхозсем те пур. Вĕсен ĕçĕсем вара пĕтĕмпех урăхла. Хурамалти «Заветы Ильича» колхоз (председателĕ Карпов юлташ) кĕрхи çĕртме тăвас плана ыран-паянах вĕçлет. Тури Кураданри Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Гордеев юлташ) кĕрхи çĕртмене 90 гектар вырăнне 80 гектар тунă.

Х. ЛИСИН.

Комсомолец-бригадир колхозра фронтри пек ĕçлет

Калинино районĕнчи Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн 6-мĕш бригадине çамрăк комсомолец Петр Языков ертсе пырать. Вăл 17 çулта çеç-ха. Çамрăк пулсан та вăл кăçалхипе иккĕмĕш çул бригадир пулса ĕçлет, бригада ĕçĕсене лайăх йĕркелет. Вăл ертсе пыракан бригада колхоз производствинче малта пырать.

Колхозниксем хушшинче ĕçе лайăх тата вăхăтра йĕркелесе пынине пула, Петр Языковăн бригадинче кулленхи ĕç нормине тултарман колхозник çук. Кашни колхозникпе колхозница кунта, вăрçă вăхăтĕнчи ответлăха туйса, ĕçе пысăк хастарлăхпа туса пырать. Октябрь уявĕ умĕнхи социалимлă ăмăртăва хутшăнса, бригада уяв тĕлне государство умĕнчи пур обязательствăсене те парса татма, натуроплатăна тӳлесе татма тата Хĕрлĕ Çар боецĕсене уяв ячĕпе хаклă парнесем ярса пама пулчĕ. Колхозниксем хăйсен сăмахне çирĕп пурнăçласа пыраççĕ. Государствăна тырă турттараççĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тума тирсемпе çăм пухса пачĕç, уяв ячĕпе парнесем ячĕç.

Çамрăк бригадир хăйĕн бригадинчи кашни колхозника хисеплет, вăл мĕн тума пултарнине тĕплĕн пĕлсе тăрать. Çавăнпа колхоз производствинче кулленех ватă колхозниксем те, çамрăксем те усăллă ĕçре. Бригадăри ватă колхозник И. Дмитриев, тĕслĕхрен, урапасем юсать. Халĕ ĕнтĕ, хĕле кĕме хатĕрленсе, вăл ĕçрен кĕçех пушанакан урапасене çитес çул валли юсама тытăнать. П. Языков юлташ ĕçкунĕсене тĕрĕс те тĕплĕн шута илсе пырать. Колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене вăл кашни пилĕккунрах пирĕн ĕç кĕнекисем çине кĕртет. Çамрăк бригадир-призывник хăйĕн ĕçне колхозра фронтри пек туса пырать, çавăнпа ăна колхозниксем те хисеплеççĕ, мухтаççĕ.

И. ФЕДИНГИН.

Хĕллене хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва ялсоветне кĕрекен «Ново-Чурино» колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленет. Витесене пурне те юсанă. Выльăхсем валли 60 тонна силос хывнă.

Фермăра выльăхсен шучĕ те ӳссех пырать. Контрактаци йĕркипе 20 пăру илнĕ. Колхоз кăçал 20 хур илсе çĕнĕ ферма организацилерĕ. Çапла колхозăн кăçал 5 ферма пулать.

Выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес енĕпе фермăсен заведующийĕ В. Сорокин юлташ тăрăшса ĕçлет.

В. ЕРТМАКОВ.

Ют çĕршывсенче

Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсемшĕн гитлерла захватчиксем тата вĕсемпе пĕр каварлисем ответлă пулни çинчен Совет Правительстви тунă заявлени пирки Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсемшĕн гитлерла захватчиксем тата вĕсемпе пĕр каварлисем ответлă пулни çинчен Совет Правительстви тунă заявлени Лондонра çынсене питĕ интереслентернĕ. Пур хаçатсем те çав заявленирен нумай вырăнсене илсе пичетлеççĕ. Вăл заявленин текстне Лондонри радиостанци англичан чĕлхипе, француз чĕлхипе, нимĕç чĕлхипе, итальянец чĕлхипе, чех чĕлхипе, поляк чĕлхипе тата ытти чĕлхесемпе те вуласа панă.

Лондонри радио çапла калать: Совет Правительстви пĕтĕм тĕнчери специальнăй трибунала тума тата гитлеровецсемпе вĕсене пулăшакансене суда пама сĕннине Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсенче йышăнĕç, тет.

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра çакна палăртса параççĕ: Совет Правительствин заявленийĕ Англи правительствин тĕллевĕпе, лорд-канцлер (Саймон октябрĕн 7-мĕшĕнче лордсен палатинче тунă заявленире асра тытнă тĕллевпе йăлтах килĕшсе тăрать, теççĕ. (Саймон хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Англи правительстви вăрçăри преступленисене йĕрлесе тĕпчемешкĕн пĕрлешӳллĕ нацисен комиссине тума сĕннĕ, тенĕ.). Гесс çинчен калас пулсан, тет информаци министерстви, вăл Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Лоу общинăсен палатинче октябрĕн 14-мĕшĕнче тунă заявленире кăтартса панă руководительсенчен пĕри пулса тăрать. Вăрçăри преступленисене йĕрлесе тĕпчемешкĕн тума шутлакан комисси Гитлер, Геринг, Геббельс тата Гиммлер пек гитлерла пуçлăхсене суда парĕ-и? тесе ыйтсан, Лоу общинăсен палатин ларăвĕнче октябрĕн 14-мĕшĕнче çапла каланă:

«Пĕрлешӳллĕ нацисен вăрçари преступленисене йĕрлесе тĕпчекен комиссийĕ фактсене палăртса паракан орган пулса тăмалла тесе шутлаççĕ. Çавăнпа çав комиссин фукцийĕсем çаксем пулса тăраççĕ: унăн тискер ĕçсене тума хĕтĕртсе тăнипе е вĕсене хăйсем тунипе çав тискер ĕçсемшĕн ответлă пулса тăракан мĕнпур çынсем çинчен правительствăсем паракан свидетельле паказанисене пухса пымалла. Халь асăннă правительствăсене айăплă çынсем çинчен, вĕсем мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăрах, çавăн пек свидетельле показанисем тăратма ирĕк парĕç».

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительствин заявленийĕ çинчен каласа, Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: «Гитлерла тискер ĕçсем тунăшăн айăплă çынсене, союзниксен аллине лекнĕскерсене, наказани памашкăн халех мерăсем йышăнмалла, тесе калани совет меточĕсен çирĕплĕхне тата вĕсем тӳррĕн пынине кăтартать. Анчах та ун çинчен çак ĕçпе интересленекен пур правительствăсен те тĕплĕн сӳтсе-явмалла. Ку ыйтура питĕ сложнăй япаласем пур. Çавăн пек ыйтăва ӳсăн сӳтсе явсан союзниксен ĕçĕшĕн мĕн чухлĕ усăллă пулнине калама йывăр. Ыйтуна практикăлла енне илсен, союзниксен çавăн пек пĕтĕм тĕнчери трибунал тумалли условисем çинчен тата унăн ĕç йĕрки çинчен мĕнле те пулсан килĕшсе таталмалла. Уйрăмах та айăп мĕн тери пысăккине тата мĕн тери пысăк наказани памаллине палăртас тĕлĕшпе çапла туни кирлĕ. Вырăссен заявленийĕнче, уйрăмăн илсен, Гесс çинчен ыйту кăларса тăратнă пулин те, çакă паллă: уйрăм ыйтусем çинчен сӳтсе-явиччен малтан пĕтĕмĕшле, принципиальнăй ыйтусем тĕлĕшпе калаçса таталас пулать».

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин паллă писателĕ Герберт Уэльс ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каланă: «Эпĕ Совет Правительствин заявленийĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп. Паллах, Гесса вăрçă ĕçĕсем пĕтиччен суда памалла», тенĕ.

Францин национальнăй комитечĕн çар ĕç комиссарĕ Дежан ТАСС корреспондентне çапла каланă: Молотовăн заявленийĕ кăтартса панă тăрăх, гитлеровецсене хăйсен усал ĕçĕсемшĕн наказани парас ыйту çине Совет Правительстви, де Голльпе пĕр шухăшлисем пекех, анлăн пăхать, тенĕ.

Стимсон Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарне 18 çулхипе 19 çулхи çамрăксене илме сĕннĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕ Стимсон представительсен палатин çар комиссийĕнче Конгреса çар службине 18 тата 19 çулхи çамрăксене илме сĕннĕ. Стимсон çапла каланă: Америка çарĕнче хальхи вăхăтра 4.250 пин çын шутланать, унăн йышне килес çула 7.500 пин çынна çитерме тăрăшмалла, ку шутран çĕр çинчи войскăсенче 3.200 пин çын тата сывлăш флотĕнче 2.200 пин çын пулмалла, тенĕ. Стимсон тата çапла каланă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, производство май панă таран, чи пысăк сывлăш-çар вăйĕсем тăвасшăн. Çар министерстви çĕр çинчи йышлă чаçсене, тинĕс флочĕ май панă таран, США тулашĕнче хатĕрлесе тăрĕ, тенĕ.

Стимсон çамрăксем çар тăвас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă тата çакна кăтартса панă: çара 18—19 çулхи çамрăксене илни промышленность производствинчен аслăрах çулхи çынсене мобилизациленĕ чухлех сиен кӳмĕ, тенĕ.

УИЛКИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ТАВĂРĂННĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельтăн личнăй представителĕ Уилки Вашингтона таврăннă. Вăл Чунцинран Вашингтона самолетпа Аляска урлă таврăннă.

ВАШИНГТОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Рузвельтăн личнăй представителĕ Уилки Чунцинран Вашингтона çитнĕ.

Паянах Уилки Рузвельт патĕнче пулнă, Рузвельтпа вăл сехет çурă калаçнă.

НИМĔÇСЕН ИКĔ ГЕНЕРАЛНЕ ТАТА ВЕНГРИ ДИВИЗИН КОМАНДИРНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Германин бронетанковăй корпусĕн командирне барон фон Лангерман Унд Эрленкамп генерала, Германин пехотнăй дивизийĕн командирне Иоахим Шлейниц генерала тата Венгри дивизин командирне вĕлернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ:

Контролеры-ревизоры, секретарь-машинистка. С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Красная площадь 4, здание Наркомфина, 3 й этаж. Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР. Тел. 4—00

ЧУВАШСКОЙ КОНТОРЕ „ТЕХЖИРПРОМ" ТРЕБУЮТСЯ: бухгалтер, плановик-экономист, кожевник, возчик, временные рабочие.
Обращаться по адресу:
Чебоксары, Канашская, 17, Техжирпром. Тел. № 1—66.

ТЕХНО-ТКАЦКОЙ ФАБРИКЕ ТРЕБУЮТСЯ: начальник строительства, прораб, десятник, снабженцы, зав. складом, бухгалтер. Оплата по соглашению.
Обращаться: пос. Волгостроя, помещение Черепичного завода. Тел. № 7—46.
ДИРЕКЦИЯ.

Пропали лошади:

1 Жеребец, 4 лет, рыжий, на лбу звезда, рост 133 см.
2. Мерин, гнедой масти, 13 лет, без примет, рост 130 см.
3. Мерин, серой масти, 18 лет, рост 150 см
Знающих местонахождение их просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, Учительская, дом 39, Заготживконторе.

Пропала лошадь. Приметы: мерин, масти гнедой, на лбу звезда, хромает. Задержавших просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 7, управление Землеустройства. Телефон № 5 — 05.

ВОДОСВЕТУ ТРЕБУЮТСЯ: слесаря 6 и 7 разрядов, машинисты, пом. машиниста к двигателям дизеля, электромонтеры, техники-электрики, шофера, вахтеры пожарной охраны, каменщики, чернорабочие, бухгалтера и ученики (женщины) для подготовки слесарей, электриков, машинистов, пом. машинистов и смазчиков.
Одиночки обеспечиваются общежитием, имеется столовая.
Обращаться: Водосвет, отдел кадров, тел. 4—28.
ДИРЕКЦИЯ ВОДОСВЕТА.

Сберегательные кассы начали прием выигрышных вкладов.

Тиражи выигрышей по выигрышным вкладам производятся два раза в год.
В каждом тираже на 1000 сберегательных книжек разыгрываются:

1 ВЫИГРЫШ — в размере 200% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;
2 ВЫИГРЫША — каждый в размере 100% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;
22 ВЫИГРЫША — каждый в размере 50% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке.

Вкладчику предоставляется право пополнить свой выигрышный вклад или получить его в любое время частями, либо полностью из сберегательной кассы.

ВНОСИТЕ ВЫИГРЫШНЫЕ ВКЛАДЫ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ!

Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.
5 5

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—57, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 387 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.